„Канаш“ хаçат çумĕнче тухат̆.

КАПКĂН 7-мĕш №

# Шупашкар такмакĕсем.

(„Çĕмĕрт çеçки“ кĕввипе).

Чăваш пурнăçĕ хуланалла та кĕрле пуçларĕ. Çавăнпа вĕ-сен йуррисене те хула шăрши çапат̆. Пурнăç чăпти çавăн пек вăл.

Çĕмĕрт çеçки çурăлсан
Вăрман витĕр курăнат̆;
Атăл пăртан тасалсан
Шупашкар илем палăрат̆.

Тăнкăлти-тăнкăл чан сасси
Кунĕн çĕрĕн хăлхунта;
Ирĕн те каçăн качаки
Тĕкĕшеççĕ урамра.

Çуртйĕр питĕ сахалчĕ
Çĕнĕ çуртсем тумалла:
Хăш хăш чиркӳн тăррисем
Вĕçрĕç анчĕç чунланса.

Пĕр чиркĕвĕ çав çавах
Аптек йенне пăхкалат̆!
Емел илме кĕмешкĕн
Куллен кунах тайăлат̆.

Йалтан килнĕ çынсене,
Аптек умне ларс...ссăн
Чиркӳ тăрри—шеллесе,
Ӳксе лапчăтса хурасшăн.

Чиркӳ хĕресĕсенчен
Рати хĕлĕх карăннă:
Рати пырса ларасран
Хăшĕ тарса пытаннă.

Труттуарсем çийĕнче
Комунхосăн чулĕсем
Кăштăртатса выртаççĕ
Çитес çулччен пурнасшăн.

Ленин тейен урамра
Милитсионер умĕнче,
Вăрман тресчĕн пристăнĕ пек,
Йăвăç выртат̆ йăтăнса.

Шупашкарта тем те пур:
Трестсем-мĕнсем, сӳтăçсем,
Кайа кайа ӳкекен
Ӳсĕр мототсиклетсем.

Упа кĕлетки усламçă
Аш сутгипе чĕрĕлнĕ;
Копператтивсем пире
Çĕнтереймĕç, тейеççĕ.

Шупашкарта мĕн нумай?
— „Тет“-пе сăра пит нумай.
„Тет“-не пухса хурсассăн
Чиркӳ çӳллĕш пулат̆, тет.

Пођнитсăра кĕтесре
Хĕрсе картла выђђаç, тет;
Хăшхăш машпинисткăсен
Машшин çинчех тĕкĕр, тет.



Кутăн пуçăн çавăнса,
Сив çил чупат̆ урамра,
Пĕр вĕçĕмсĕр тусанпа
Вăл выђђатĕ савăнса.

Хĕрсен кăтра çӳçĕсем
Сӳтĕлеççĕ çилпеле;
Муталанчăк çăмхана
Тĕпĕ-йĕрĕпех сӳтмелле.

Васанкка.

# Хӗрарӑм претҫетаттӗл.

Пухуран Вӑрӑм Хӗлип ҫиленсе таврӑнчӗ.

— Атте, ӑҫта анне? тесе ыйтрӗ пӗчӗк ачи Кавӑрле.

— Ан калаҫ, шеҕмӑ! тесе кӑшкӑрса йачӗ ашшӗ.

Унтан ашшӗ ҫӗлӗкне ҫӗре ҫӗклесе ҫапрӗ те—

— Аннӳне, йеҕрон маҕ, йал претҫетаттӗлне суйларӗҫ, тесе хучӗ.

Хӑранипе Кавӑрле йӗре пуҫларӗ.

—- Мӗн. ачам, йӗретӗн? Кӑмака ҫинчен анса Кавӑрлене асламӑшӗ йӑпатма пуҫларӗ.

Кавӑрли чарӑнмасҕ. Йӗрет.

— Аннене претҫетаттӗле суйланӑ та...

— Ак тата.. Хӗрарӑма претҫетаттӗле суйланӑ... Ей, тур-тур тур! Чӑнах тӗнче пӗтет пулмалла... Хӑҫан ҫапла пулнӑ пур.

Асанне те йӗме пуҫларӗ.

Кавӑрле те йӗрет.

Вӑрӑм Хӗлип пӑхса тӑчӗ, тӑчӗ те те Лутра Паҕук патне тухса кайрӗ.

— Куҫӑм ан куртӑр, хӑлхам ан илтӗр...

Вӑрӑм Хӗлип Лутра Паҕук патне кӗчӗ те:

— Пӗтрӗм пуҫ, пӗтрӗм ӗнтӗ... Аллине сулса, пуҫне усса Хӗлип алӑк кутне ларчӗ.

— Мӗн пулчӗ тата? тет Лутра Паҕук.

— Арӑма претҫетаттӗле суйларӗҫ, тет лешӗ сӑмсине нӑш нӑш туртса.

— Суйларӗҫ пулсан—лайӑх, тет Паҕукӗ.

— Есӗ те кулатӑнҫке манран, кум...

— Ним те кулмастӑп. Сан арӑму претҫетаттӗл. Сана чыс. Санӑн лава каймалла мар. Сана усӑран пуҫне урӑх ним те ҫук кунта. Арӑму урлӑ есӗ хӑвӑн тусусене те пулӑшу пама пултаратӑн. Акӑ, ман сӑмокон аппарачӗ пур. Ӑна епӗ мунчара пытарса усраттӑмчӗ, халӗ ӑна епӗ кӑлармa та пултаратӑп. Мӗншӗн? Мӗншӗн тесен есӗ мана пулӑшма пултаратӑн. Арӑмна пӗрик сӑмах кала та ҫӗҫ те пулчӗ. Никам та пӗлмӗ. Чимха епӗ пӗр путтылкӑ ҫуттине кӑларам. Ӗҫӗпӗри кум?

Вӑрӑм Хӗлипӗн чӗри лаптах кайрӗ.

— Тӗрӗс, тӗрӗс. Чӑнах, епӗ упӑшки вӗт, вӑл ман арӑм. Еп мӗн калаҫине вӑл тӑватех. Епӗ хӑранӑчӗ...

Ҫурҫӗр иртсен Хӗлип хӑйӗн пӳртне пырса кӗчӗ.

— Мӗншӗн тӗттӗм? Ей, Укахви, лампӑ ҫут...

— Вырт, вырт. Сӑмакон ӗҫсе тултарнӑ та сысна пек ҫухӑрма пуҫлаҕ...

— Кам сысна? Епӗи? Еп сана кӑтартӑп. Есӗ претҫетаттӗл пулсан та епӗ сана ҫӳҫӳсенчен йарса тытсан, кӑтартӑп ҫут тӗнчене! Итле мана, епӗ сан упӑшку, есӗ ман арӑм... Мӗн тӑвас тетӗп, ҫавна тӑватӑп... Чӑнах сӑмакон ӗҫрӗм. Кам патӗнче ӗҫнине те калӑп Лутра Паҕук патӗнче. Итле, увӑн сӑмокон аппарачӗ пур, есӗ вӑл аппарата милитсине ан партар...

Ӑнлантӑни?

— Ӑнлантӑм... Вырт, вырт...

Ирхине Хӗлип тӑчӗ те йӑваланнӑ пуҫне хыҫма пуҫларӗ Унчен те пулмарӗ пӳрте исполниттӗл кӗрсе тӑчӗ.

— Аҕа совета, сана претҫетаттӗл чӗнет, терӗ.

— Мӗнле претҫетаттӗл, тет Хӗлип.

— Йулташ Укахва, ҫӗнӗ претҫетаттӗл...

— Е... Хӗлип исполниттӗлпе пӗрле совета утҕараҕ.

Совета кӗрсен Хӗлип чӗтресех кайрӗ.

Пӳрт тулли халӑх. Малта Укахви лараҕ. Ун умӗнче Лутра Паҕук. Урайӗнче сӑмокон аппарачӗ выртаҕ. Укахви Лутра Паҕука вӑрҫаҕ:

— Ҫапла ҫапласкер... Халех сана аппарату мӗнӳпе вулӑса йаратӑп...

Унтан Хӗлип ҫине пӑкрӗ те...

— Есӗ самокон ӗҫме йурататӑн, акӑ сана наккасани... Пайанах лава кай.., Лутра Паҕука вулӑса леҫсе хӑвар...

— Чимха, чимха, Укахви, ӗретлӗ пул...

— Мӗн Укахви? Епӗ пӳртре Укахви. Кунта епӗ претҫетаттӗл. . Кай киле..

Хӗлип тӗлӗннипе хытса кайрӗ. Унтан сӑмсине усса тухса кайрӗ.

Каҫхине Укахви киле таврӑнсан Хӗлип арӑмӗ патне пычӗ те:

— Пайан мана претçетаттĕл совета чĕнсе лава йамалла турĕ.

— Чăнахи?

— Чăнах. Анчах лаши мĕнле иккенне ху та пĕлетен, ухсаклаĭ вĕт...

— Нÿ йурĕ. Епĕ претçетаттĕлпе калаçса пăхăп. Тен каçарĕ те...

Хĕлипĕн кăмăлĕ лăпланчĕ.

—Кÿр виççĕ чуптуса илем, терĕ вăл арăмне ыталаса.

—На чуптăвах еппин хырăм тăраначен. Килте епĕ санăн арăму, советра... сана ахаҕ çын шутĕнче анчах шутлатăп, тет Укахви кулкаласа.

---

## Татах „ревиçи" тума тухнă.

Йетĕрнери пуштă кантурĕн пуçлăхĕ уйесри хăйне пăхăнса тăракан пуштă уйрăмĕсене ревиçи тума тухнă. Шăмат пуштине епĕ те пырса кĕтĕм. Пăхап—мана хирĕç пуштă пуçлăхĕн пÿлĕмĕнчен çак „ревисор" тайкаланса, аллисемпе çтанана хыпаласа туха параĭ. Хăй те какриш килет—карланкипе крăнк, крăнк! туса пыраĭ.

— Йе...тĕр...не...не çитичен (ă-хă-ă-к) епĕ сан...ла...шу çине лар...са пы-пы пырап, тет мана вырăсла.

— Йураĭ, терĕм епĕ, анчах сана „Капкăна" çаклататăпах, терĕм чăвашла.

„Капкăна" аса илни кăмăлне каймарĕ пулмалла (ÿсĕр пулсан та аставатех çав, шеремет, „Капкăнăн" 2-мĕш №-рне çакланнине),--шăртне тăратрĕ те:

— Есĕ мана хирĕçиха, молокосос, тет.

Йа хто? тесе хучĕ йулашкинчен·

Начаҕнĕк начаҕнĕкех—епĕ те хăраса ÿкрĕм. Тухрăм та вĕçтертĕм Йетĕрнене. Мантан „ревисор" сысна цекех йăваланса йулчĕ кĕтесре.

Кайалла таврăннă чух каллех Шăматра чарăнтăм.

— Йепле ăсатрăр ревисора? тесе ыйтрăм шăматсенчен.

— Ик лашапа тăрантаспах Йетĕрнене леçсе хăвартăмăр терĕç.

---

## Лартрăмăр.

— Епĕр Михетер мучипе Происвотсойуса тавар тăратма пултăмăр.

— Ну, мĕнле? Тăратрăри?

— Тăратма май килмерĕ. Лартрăмăр.

## Телей çине телей.

Икĕ Совет чиновникĕ пĕрпĕринпе тĕл пулса калаçа пуçларĕç, тет:

— „Иван Йванович, йепле, сыв пурăнатна?" тет пĕри.

— „Тавта-пуç турра, пит аван пурăнатăп халĕ", тет тепĕри.

— „Есĕ кăçал пысăк вырăна кĕнĕ теççĕ, вăл хыпар тĕрĕси?" тет.

— "Тĕрĕс, кĕтĕм çав," тет ку та ăна хирĕç.

— „Телей санăн," тет йулташĕ ăна хирĕç тĕлĕнсе.

— Ан кала та ĕнтĕ, кăçалхи çул епĕ виç тапхăр пит телейлĕ пултăм. Нихăçан та капла телейлĕ пулнине, астумастăп тет.

— „Апла пулсан тата пĕр-пĕр йапала илтĕнем?" тесе, ыйтаĭ йулташĕ, пĕлесшĕн пулса.

— „Илтĕм," тет ку та.

— „Мĕн йапала илтĕн?" тет.

— „Мана кăçал „улпут" йачĕ пачĕçĕ, халичен есĕ ху пĕлетĕн, епĕ улпут марчĕ", тет.

— „Виççĕмĕш телейĕ тата мĕн? тесе ыйтаĭ йулташĕ, слушиĭ тунăшăн тата çапла пĕрпĕр аван йапала панă тăр," тесе.

— „Виççĕмĕш телейĕм пуринчен те пысăкрах, тет.

— „Каласа пар ĕнтĕ ăна та" тесе ыйтаĭ йулташĕ.

— „Арăмран хăтăлтăм", тет кулса.

— „Йепле хăтăлтăн, хăваласа туса йатăна?" тесе ыйтаĭ.

— „Çук, тавта пуç турра, хăйех тарса кайма пĕлчĕ", тет.

Йуркин.

# ВЫЉӐХ-ЧӖРЛӖХ ҪЫРӐВӖСЕМ.




Хут пӗлменлӗхе тӗп тӑвас ӗҫ аван пыратиҫ! Вӑл паллӑ ҫакӑнтан та: ҫынсемҫеҫ мар ман пата ҫырусем йараҫҫӗ, ӗнесем те, лашасем те шалӑпӑсем ҫыраҫҫӗ. Ҫыру хыҫҫӑн ҫыру пырат. Хӑйаматла йапала! Шухӑша кайсан пуҫ хыҫал йенне ҫаврӑнмалла: хӑшӗ ҫырат хӳрипе, хӑшӗ-чӗрнипе, хӑшӗ тата сӑмсипе. Ак, шӑлӑмсем, вӗсен ҫырӑвӗсем.

— Ырӑ мучи! Епӗ Шӑмалак вулсоветӗнчи йамшӑк лаши. Шалӑпӑ манӑн вӑрӑм мар: кунта пурӑнма питначар. Претҫетаттӗл пире хӗсӗрлет: пустуйах пире кӳлсе ҫӳрет. Пӗрре 2 майрапа 1 хвершӑла, тата хӑйне, усала, Йелчӗк урамӗпе икӗ кун каттачи чуптарса ҫӳрерӗмӗр,—хура тара ӳкрӗмӗр. Пӗрре сиккипе чуптарат, тепӗре йуртӑпах йарат. Ҫавӑнпах ырханланса карӑмӑр, аран-аран хашкатпӑр. Сана йӑлӑнатпӑр: пулӑш пире, ҫав усалтан ҫӑл пире. Претҫетаттӗл пӗрер чӗл ҫӑкӑр пире памасан, ҫураҫасса ан та шан. Кӑтра ҫӳҫлӗ ҫын пуҫне йӗс турасӑр уҫаймӑн, ҫавӑ усал Еллене «Капкӑнсӑрах» йусаймӑн.



Хамӑн чӗрнесемпех ал пусап: *Ӑйӑр.*

— Ырӑ мучи, сана ҫыру йама йурати? Епӗр, Мӑн-Шахчӑрти, Шупашкар вулӑсӗнчи, ӗнесем, лашасем хамӑрӑн хуҫасем ҫинчен шалӑпӑ паратпӑр. Пуҫӑмӑрсене тайсах ыйтатпӑр: вӗсем ҫине штраф хурӑр. Налок спискине тунӑ



чухне, икӗ мӑн лаша вырӑнне, пӗр тыха тесе ҫыртараҫҫӗ, икӗ ӗнене хӗл каҫнӑ пӗр пӑру тесе шутлаҫҫӗ. Пире выљӑх шутне кӳртмеҫҫӗ,—йӑтӑпа кушак вырӑннех хураҫҫӗ. Халӗ пирӗн кӗтӳре нимӗн йӗрки те ҫук темелле: хусах лашасем кӗҫенеҫҫӗ, арлан тӑпри кӑлараҫҫӗ, ӗнисем мӗкӗреҫҫӗ, навус куписене тӗкеҫҫӗ, сыснасем ҫухӑраҫҫӗ,—хӑйсене списка кӳртме ыйтаҫҫӗ.

Сана йуратакан: сыснасем, лашасем, ӗнесем (*2-ӗн алӑ пуснӑ*).

— Епӗ Пушкӑртри Ухваниҫ пуп ӗни. Мана хуҫа лайӑх пӑхат̆,—каҫсерен пӑтратса парат̆. Пурӑнма пит лайӑх капла. Пупӗ турӑх йуратат̆ пулмалла,—мана сунӑ чухне хӑйех пырат̆ те: ку сӗтрен турӑх ту, тет. Хӑй инкек-синкек пулсан, выԓӑх мурӗ тухсан турра пуҫҫапма, молепӗн тутарма хушат̆ ҫынсене,—турӑ ҫине шанма вӗ-



рентет.—Ҫапах та, шеремет, мана укол тутарчӗ. Турӑ ҫине-ҫеҫ шансан ӗнем вилсе кайсан мӗн тӑвӑн?—терӗ пулӗ вӑрттӑн. Ҫавӑншӑн ӑна икӗ пӑру туса парас тетӗп, «Капкӑн» урлӑ тав кӳретӗп.

*Хам хӳрепех* алӑ пусатӑп: Ухваниҫҫи—паниҫҫи.

— Салам сана! Епӗ Шахчарти сысна. Йалсовет членӗ Пракох мана о-ох! хытӑ хӗсӗрлет. Алтуйипе перет. Иртнӗ ернере манне хӑлхасене, тата хӳрене касса илчӗ. Манӑн пӗтӗм ӗрешӗм, пӗтӗм илемӗм сӑмсапа хӳреречӗ. Халӗ ӗнтӗ пурте сыснасем те, ытти выԓӑхсем те: хӳрӳ ӑҫта, хӑлху ӑҫта, тесе мӑшкӑлӗҫ манран. Тусӑм Йӑван, есӗ пит аван, тенине илтнӗчӗ.—ҫав Пракоха чарасчӗ.

Хам сӑмсапа ал пусап: *Павӑл сысни.*

Ак, шӑллӑмсем, мӗн ҫинчен ҫыраҫҫӗ выԓӑхсем. Ун пек шалӑпӑсем урӑх ан пулчӑр тесен, выԓӑха выԓӑх шутне хумалла, ӑна йуратмалла. Шалӑпӑ кӳ-



рекенсене, малти урисене тытса, ал паратӑп, пуҫ тайатӑп.

Йӑван мучи мыскараҫӑ.

## Шуйтана ҫурта лартни.

Ватӑ карчӑк, чиркӳре турӑшсем умне ҫуртасем лартса ҫӳренӗ чухне, пӗр турӑш ҫинче леш тӗнчере тамӑкри ҫынсене йепле асаплантарнине курсан, ҫав турӑш умне те ҫурта ларта пуҫларӗ, тет. Ҫурти шуйтанӑн сӑмси умне тӗлех пулнине курсан, тепӗр хӗрарӑмӗ, унпа йунашар тӑраканни, кунтан: мӗншӗн есӗ шуйтана ҫурта лартатӑн? тесе ыйтрӗ, тет. Ватӑ карчӑкӗ те ӑна хирӗҫ:

— «Малашне хӑшийӗн аллине ҫакланасса пӗлместӗнҫке»—тесе каларӗ, тет, хуйхӑрса. Ив. Йуркин.

### Пуԓнитсӑра.

— Епӗ сив чир емелӗ пурши, тесе килтӗм те.

— Ҫук. Сив чир емелӗ пӗтни уйӑх ытла. Виҫ кун шырасан та пӗр порошок тупаймӑн.

— Емелне тума ҫу кирлӗ, теҫҫӗ те, епӗ пӗр-икӗ кӗренкке ҫу, 30 ҫӑмарта илсе килсеттӗм. Ҫук тетӗн те—кайас пулат̆.

— Чимха, ан кайха еппин. Шкапра пӑртак пурчӗ пек астӑватӑп. Парса йарам, ҫуне кӳр, емелпе хутӑштарма кирлӗ.

Ҫулӗр.

# „Приккассем."

Шуђури йалканаш пуçлӑхӗ (Хӗрлӗ Чутай в.) Фарфос Хӗветӗрӗ пупа вађђи исполниттӗлсене çӑмарта пуçтарттарать.

Шӑланхулли.

Латра-Пакӑш йалсовечӗн членӗ (Шӑмат в.) Прокофи Ерхипӗ пачӑшкасене турӑпа çӳренӗшӗн халӑх укçинчен 2 тенкӗ парса йанӑ.

Çав шутра турра ӗненмен 25 çын укçи те кайнӑ.

Мутнов.

Претçетаттӗл алӑсем тӑратма ыйтать.

— Кам пупа çӑмарта пухса парасшӑн?

Исполниттӗлсем чӗнмеççӗ.

— Кам пупа çаран тӳпи парасшӑн? Çавсем алӑ тӑратчӑр.

Халӑх чӗнмест. Партти членӗсемпе комсомолӗсcем хирӗç шавлаççӗ.

Сасӑсем:

— Йалсовечӗн пупсен ӗçне хутшӑнмалла мар! тесе кӑшкӑраççӗ.

Претçетаттӗл халӑх çине çиленсе карӗ.

— Кам кӑшкӑракана пурне те „выкӑвӑр" паратӑп. Совет претçетаттӗлне итлемеççӗ, тесе çыратӑп, тет.

Сасӑсем:

— Парах!.. Çыр! Хӑрамастпӑр, теççӗ.

Претçетаттӗл алла шурӑ хут илет те, çавӑнтах „выкӑвӑр" çырма пуçлать.

„Çавсем пупа хирӗç пыраççӗ. Пупа çаран панӑшӑн ман çинчен шалӑпӑ паратпӑр, теççӗ. Пупа кӑмӑлсӑр тунӑшӑн епӗ айӑплӑ мар. Халӑх хӑй айӑплӑ пулать", тесе наттатси пачӗ вӑл халӑха.

Хӑшӗ çавӑнтах:

— Ахӑл-ахӑл кулса йараççӗ.

— Молотетс пирӗн претçетаттӗл!

* * *

Каçал йалӗнче (Йӗпреç уйесӗнче) урахларах „приккас" тухнӑ. Кунта совет пуçӗсем мар, пупсем „приккас" пама тытӑннӑ.

Чиркӳ совечӗн саççетанийӗ. Претçетаттӗл пуканӗ çинче Каçал пупӗ ларать.

— Йуратнӑ тӑванӑмсем! терӗ вӑл.— Хаçатсем çинче халӗ хӑвӑр та вуланӑ пулӗ: совета тӑшмансем тапӑнма тӑни çинчен çыраççӗ. Вӑл ӗнтӗ мӗне те пулсан систермелле пире... Тата есӗр хӑвӑр та илтнӗ пулӗ: совет хӑй илнӗ çуртсене кайалла тавӑрса парать, тенине. Ахӑртнех, тӑшман вӑйӗнчен совет хӑрама тытӑннӑ пулас. Çавӑнпа пирӗн те çывӑрмалла мар.

— Çывӑрас мар. Аплах пулсан, мӗн çывӑрмалли, мӗн хӑраса тӑмалли пултӑр вара? теççӗ чиркӳ совечӗн членӗсем.

Членсем апла каласан, пуп çунатланса карӗ.

— Йуратнӑ тӑвансем! терӗ вӑл унтан.—Тавай вулӑса приккас çырӑпӑр. Чиркӳ çурчӗсене халех ирӗклетме ыйтӑпӑр.

Членсем:

— Çырас ара!.. Çырас! теççӗ.

Каланӑ-тунӑ.

Каçпала, кӗнчелерте ӗççем пӗтсессӗн, Каçал вулӗçтӑвкомӗн претçетаттӗлӗ патне такам çынӗ хашкасах чупса пычӗ. Аллинче çыру хутаççине претçетаттӗл патнелле чӑсрӗ те:

— Йулташ претçетаттӗл!.. Приккас йачӗç, ачам! Приккас!.. терӗ.

Претçетаттӗл унчен вутӑ çурса тӑратчӗ. „Приккас" тесе кӑшкӑрнине илтсен, вӑл шуралсах карӗ.

— Санаҫҫи пӗтнӗ. Кам приккас йама пултаратха халӗ?

Конверт çине пичет çапни паллах ӳкмен, темле хуратса пӗтернӗ... „Совет" тени анчах палӑрать. Претçетаттӗл конверта хӑракаласах уçрӗ.

— Ах, мошеннӗксем! тесе илчӗ вӑл, „приккаса" вуласа тухсан.

Претçеттатӗл çавӑнтах тата ӑшшӑн кулса йачӗ. Вуттине çурса кӗртсен, „приккас" пирки каçченех ахӑлтата— ахӑлтата кулчç.

— Вот „приккас"!.. Тӗлӗнмелле „прӗккас", тесе калать те арӑмне, претçетаттӗл каçса кайса кулма тытӑнать.

Хумма Çеменӗ.



# „Капкăн“ кĕлеми.

«Капкăн» тăвакан тимĕрç лаççинче ĕнсерен, тата çамкаран кĕлеме пусмалли шĕшлĕ туса хатĕрленĕ. Кĕлеми çине «Намăссăр» тесе çырнă.

(Ретаксири «Тÿнтерлĕш» йатлă пĕрене хаçатĕнчи çĕнĕ хыпар).

„Капкăн“ ăстисене нимĕн те тăрантарас çук. Анчах айăк пĕрчисене суса пăхрĕç, пăшатанларĕç.., вăлтасемпе çаклатрĕç, тапăпа хăплаттарчĕç, тем мур капкăнăскопĕ шутласа кăларчĕç.

Халĕ тата çирĕпрех ĕçхатĕрĕсем туса хатĕрлеме тытăннă. Йăван Мучи шăлнĕн аллинче пайан пĕр кĕлемеллĕ шĕшлĕ тупрăмăр. Ку кĕлеме хĕртсен те лайăх пусать, сурсассăн та лайăхах ĕнселет.




Акă кăшт хуллен кĕлемелесе кăтартарха. Лайăхрах асăрхăр кĕлемине.

— Ишекри комсомол йачейккин çекреттарĕ Çерепренников кĕмĕлленсех çитнĕ. 3 уйăх ĕнтĕ çывăрать. Çывăрнă çĕртех кĕмĕл ĕнсине шăратса кĕлеме хутăмăр, Çывăракана кĕлемелеме кансĕрех мар.

— Шаккăлти (Тукаш в.) çекреттар хăйех кĕлеме пустарасшăн. Вăл пур ĕçе те хăйне туртать. Вăлах йал претçетаттелĕ, копператтив пуçĕ, т. ыт.

Çывăрасса та пуриншĕн те çывăрать. Копператтивĕ те çуках темелле, йалканаш ĕçĕ те майран пăвнă пек ĕнĕрлешсе тăрать. Йачейккин хурахлатма та вăйĕ çук пулмалла.

— Иккассинчи Мĕкĕте Наумĕ икĕ алла икĕ четвĕрт йÿççине тытнă та, хăйматлăх роçне халăха выççаса парать.

„...Туй, туй, туй тумашкăн
мĕн милăй,
Четвĕрт кĕленчи пит милăй,
Четвĕрт тулли пулмасан
Туй кĕрнекĕ килес çук!..

Мĕн пур йала сассипе тăрантарать. Такам та хăйматлăх роçне вĕренсе йулмалла.

Вĕри шĕшлĕпе чăшкăртсан мĕнле йурлĕши?

„На - - а - мăссăр, намăссăр!
Ах, турах, ай тур, тур...
Пирн çамкара мĕн милăй?
«Капкăн» кĕлми пит милăй“

тесе шăрантарассăнах туйăнать.

— Урăвашри çамрăксем те чĕрĕлсех кайнă.

„Пĕр кашăк тикĕт
Пĕр чĕрес пыла пăсать“

тесе урам тăрăх чупаççĕ. Вĕсен пĕр комсомолĕсĕ мăшăрлану хакне минчет калпаккине пуç çине ÿпĕнтерессинче çеç тупнă. Кайран туйĕнче Орловпа Йекорăв „йулташ сем“ хакне урăххинче тупнă...

Минчет ахахĕпе мухмăр пуснă çамкасене пирĕн пичете пусма йатнех çав, ай йай аван!.. Урам тăрăх чупаканĕсен те ăшĕ выртĕ.

---

Кĕлемеллĕ шĕшлĕ хаклах пулмалла. Татах усрасха ăна. Кайран мĕн пур чаплисен хура хăмине тăват кĕтесе тăватă кĕлеме пусма кирлĕ пулĕ.

Шĕшлĕ.

---

## „Тетукси“.

— Мĕн пулать вăл „тетукси“ тени?

— Ванеркке словарĕнче вăл сăмаха çапла тăнлаптарса панă: „тетукси— лат.—Йĕрлесе пĕлмелли меттăт: ушкăнлă хактăсенчен ăрасна хактăсене оппăтсăрах пĕлни“.

— Мĕн вăл меттăт, оппăт, ушкăнлă хактăсемпе ăрасна хактăсем?

— Каллех Ванеркке словарне пăх.

— Мĕн вăл Ванеркке словарĕ?

— Хĕрлĕ оплошкăллă, 112 страничăллă кĕнеке.

# Çичĕ кукки.

(Пĕчĕк ача каласа кăтартнинчен).

Манăн 7 кукки пур. Çичĕшĕ те пит шулĕк вара,—шайтана та улталĕç.— Аттесем ун çинчен никама та калама хушмарĕç те, каламастăп.

Пĕр куккайĕ Уравăш йалĕнче хвершăлта пурăнаҫ. Вăл хăй Йăван йатлă, вилнĕ ашшĕне Елексантр тесе чĕннĕ тет, çавăнпа ăна Иван Елексантăрчă тесе чĕнеççĕ (амăш йачĕпе темле каламалла,—ăна пĕлместĕп). Йăван кукки пур куккисенчен те кукки, пит аван çын. Хăнана илсе кайсан пыл та çу анчах çитерсе йараҫ. Турăх йе уйран çитарса хăнан хырăмне пăсма йуратмасҫ. Вăл йалан ăспа çӳрет, çапах та, темĕншĕн, ăна йалти ватăсем йуратсах каймаççĕ: куç хыçĕнче Йăван куккийе «шуйтан хвершăлĕ» теççĕ. Шуйтан хвершăлĕ пулма... шуйтан лартманçке ăна хвершăла? Епĕ ун çинчен (шуйтан çинчен мар, кукки çинчен) сире вăрттăн пĕр сăмах каласа парам: вăл кукки пирĕн вçаткăсем илме йуратаҫ. Аҫҫах Йăванĕнчен 1 алтан, 5 пăт улма, 1 пăт ыраш илчĕ. Çынсем сисес рен автанне пусса çирĕмĕр те, йашки пит çуллă пулчĕ, сыпмалла та мар. Кукки ун çинчен калама каламарĕ те каламастăп.

Тепĕр кукки, Пракох Емелйанчă текенни, пит чейе. Кукамай калаҫ: сан Пракох кукки амăш варĕнчен тухсанах ăслă çынчĕ — ернекунсенче амăш кăкрине ĕмместчĕ (типĕ тытачĕ) тет. Кукамай каланине епĕ ĕненсех каймастăп та... Халĕ вăл Курнавăшра течукра пурăнаҫ. Тоххот сахал, çĕрĕсене туртса илчĕç, ĕненекенсем сахалланса пыраççĕ. Мĕн тăвас? Кукки течукран тухса учитле кĕме шухăш тытаҫ. Анчах мĕнле тăвас? Килйышĕсене пухса канаш тăваҫ: Йĕпреçри политкрамăтă курсне вĕренме кĕрес, тет. Калавă тунă. Епĕ течукран тухни нумай пулаҫ тесе улталаса, лекет-лекетех çав курса. Ун пек чейе çын курни есĕр тĕнчере? Ун патне хăнана çӳреме епĕ йуратмастăп, хăнана чĕнет те, хăй килĕнчен тухса тараҫ.



Виççĕмĕш кукки комуниса çырăннă. Раккапă кăнтиттатĕнче тăраҫ. (Тăвай йачейккинче). Çав кукки (Çилла Мирун ывăлĕ) нумайах пулмасҫ чиркӳре кума пулчĕ. „Çуттине“ те йанклаттараҫ. Кукки чĕркки çут чĕркки, ĕçнĕ-ĕçмен сăн кӳртет, çапах ăна ĕçместĕп, ытти куккисем ĕçчĕри.

Пупăн кушакки те пулă тытаҫ, теççĕ. Мăналти тийаккăн куккин хăйĕн те укçи нумай, майри те шалу илет. Ăçта чикеççĕши укçине? Пĕрре ун майрине, турă çыннин арăмĕ тесе учитлĕрен кăларасшăн пулнă. Çавна кукки сисет те, вулĕçтăвкома кайса майрипе уйăрлнă пек тăваҫ. Кукки майри шеремет, тăлăх арăм шутĕнче тăрса йулаҫ. Вырăнтан кăлараймарĕç вара. Куккипе майри, майрипе кукки халĕ те пĕрлех пурнаççĕ. Чиркӳве те пĕрлех çӳреççĕ. Пит варлă пулмалла! Виçĕ кукки тата Шупашкарта улпутра пурăнаççĕ. Вĕсем çинчен кунта каламăпха.

Йăван мучи çырса илнĕ.

# Саке кӗнекисенчен ҫырса илнисем.

1. „Манăн упăшкам Мăрйе Васли йатлă. Мана ҫураҫнă чухне вăл: сана алă ҫинчех йатса ҫӳрӗп, ҫиленсен те йатламăп, вăрҫма мар—кача пӳрнипе те пырса тӗкӗнмӗп, тетчӗ. Халӗ кашни кунах темиҫе хут чышса илет, пуканпа хӗнет, шуйтан. Ҫапасса асăрхаса ҫапаҭи вăл, мур илешшӗ!.. Ăҫтан кирлӗ—уктан тăхăнтартса йараҭ. Ҫава тӗпнех кайтăр вăл. Шуйтансем ҫатма ҫинче ăшлачăр ăна есрелле... Ҫавăнпа мана упăшкампа уйăрма ыйтатăп. Епӗ ҫав упăтесӗрех хамăн пурнăҫа иртерӗп.—ҫын патне ҫăкăр ыйтма кайас ҫук“.

Мӗлке Кулини.

2. «Упăшкампа уйăрма ыйтатăп. Сăлтавӗ пур, анчах епӗр ун ҫинчен ҫынна калама вăтанатпăр. Епӗр мăшăрланни пӗрик—виҫ кун ҫитет пулмалла,—тӗрӗссипех каламастăп».

Венерăв салтакпа
Анна Ухватова.

3. «Епӗр ӗнер анчах рекистратси турăмăр та, пайан уйăрлас тетӗп. Вăл мана улталарӗ. Хăйне ҫураҫнă чухне: манăн сăмавар, качака пур, тетчӗ. Киле илсе пытăм та, нимӗн те ҫук. Вӗҫрӗҫ манăн качаки те, сăмаварӗ те. Ҫийӗнчен тата айалти кӗпи-йӗмӗ те пулман хăйӗн. Вăл улталанă мана. Качакапа сăмаварӗ пулнă та, анчах унăн мар, хваттер хуҫи майрин пулнă. Тата хăйӗнпе пӗрле 8 ҫулхи шăлнӗне илсе килчӗ. Те шăлнӗ вăл, те ывăлӗ?.. Ăна манăнах тăрантарас пулаҭ вӗт. Рекистратси тунă хута хурагма ыйтатăп“.

Иван Офитсиантăв.

4. «Кашни кунах манăн арăм ҫӗнӗ сарапансемшӗн, шлепкесемшӗн, тухлисемшӗн аптратаҭ. Сарапане илетӗн – пушмак кирлӗ. Пушмакне туйанатăн—ҫӗнӗ фассонлă (ҫанăсăр) кӗпе кирлӗ. Канфеткăсăр чей ӗҫесшӗн мар. Епӗ рапочи вӗт. Ăҫтан ман ăна ваҭҭи укҫа ҫитерес. Майрана манран уйăрса урăх пуйаврах ҫынна пама ыйтатăп».

Сапошниккăв ӗҫлекен.

5. „Епӗ арăмпа аслă шкула вӗренме кайаченех рекистратси тунăчӗ. Арăм манăн чăваш матки. Ун чух епӗ ҫамрăкчӗ, ăнакăна шухăшласа илеймен. Халӗ метфак вӗренсе тухрăм та, хаҭхи арăмпа мăшăрлă пурăнма май килмессине сисрӗм. Епӗ ҫӗнӗ шухăшсемпе пурнакан ҫын, вăл асаттесен йăлипе пурăнасшăн. Епӗ ăна «хӗрлӗ», теп, вăл мана хирӗҫ „шурă“ тет. Ăҫтан пурнан ун пек арăмпа? Ҫийӗнчен вăл чăваш. Чăваш маткипе пурăнсан манран вырăссем те кулсах вилӗҫ.

Хаҭтерех арăмпа уйăрма ыйтатăп, мӗншӗн тесен мана ҫӗнӗ вырăна куҫараҫҫӗ. Уйăрмасан манпах пырӗ вăл“.

Порис Хветоттăв.

6. «Упăшкампа уйăрма ыйтатăп. Унăн арăмӗсем пилӗк—ултта ҫитеҫҫӗ, иккен. Малтанах пӗлмен. Уйăрмасан ҫакăнса вилетӗп, наркăмăш ҫийетӗп, шыва сикетӗп».

Хура куҫлă Варвари.
Й-н мучи ҫырса илнӗ.

---

## Политпроверккăра.

— Мӗнле ӗҫсем тунă Карл Маркс?

— Вăли? Вăл Енкеҭспа пӗрле пролеттариатшăн ӗҫленӗ...

— Мӗн ӗҫленӗ вăл, тетӗп сана?..

— Сахали ӗҫ... Саҫҫетанисене ҫӳренӗ, комантировккăсене кайнă, комиҫҫисенче ӗҫленӗ...

## Сопранире.

— Халăх пухăнса ҫитнӗ. Сопранине уҫма та вăхăт пуҭ. Ҫекреттар анчах ҫӗтел хушшинче ҫук.

— Чăнах та. Ăҫтаха вăл?

— Ав сӗтел айӗнче хăсса выртаҭ. Аллине путылкка тытнă.

# „Ратиосăмса“.

— Çавă çавна сăмса кăтартнă,—теççĕ. Пурнăçа пĕлме çук.

„Йетинствă“ савăчĕпе Сĕнтĕр-вăрри Ленина памĕтнĕк лартнă та, сынсем:

— Шупашкарта та çук вĕтха,—тесе хĕпĕртечĕç лешсем! Анчах Шупашкарта чаплă хапха лартрĕç те, Сĕнтĕр вăррисем сăмса кăтартас вырăнне хăйсен, сăмсисене те айалалла усрĕç:

— Чăнах та, кун пеккине өпĕр тăваймарăмăрха, теççĕ.

— Та... Сăмсапа сăмса пĕр пекех пулмасť çав!

---

Çĕрпӳ хулине ратио лартаççĕ. Мускавран контсертсем, йура, калаçу, мусăккă выђанине, калаçнине Çĕрпӳ çынвисем йăлт итлеççĕ.

Ратио илсе килнĕренпе хăшĕ пĕрин урисем канман ĕнтĕ. Ратиона вăхăтлăха лартнă çурта кунне çĕр çын та пырса кайаť пулĕ. Пыраççĕ, хĕвĕшеççĕ, чĕлхисене кăлара кăлара итлеççĕ. Çĕре йарас вырăнне пĕр прулăка шыв пуссине йанă:

— Кăва, ахалех мар пулĕ? Пусри шуйттансем калаçаççĕ пулĕ! текелеççĕ итлекенсем.

Ратиотелефон çитменине икĕ йенчен пит паллă:

1) Ратиона монастырте чăваш пуçммимине сĕрĕмлетерен, чиркӳ тăрринчен чиркĕве кӳртеççĕ;

2) Тĕттĕм сĕрĕмĕ çурчĕ вырăнне çутă, ăслăлăх тупăшĕ чăваш ирĕклĕх, револютси ĕçĕсене пĕлтерет.

Ку кăна та мар. Ратиоприемник Çĕрпӳрен пуçне тата икĕ чăваш йалне Çĕрпӳ ĕçтăвкомĕ лартараť.

---

— Ку „сăмса“ пулмари?

— Шупашкарта та çук темеççĕи?—ыйтаť пĕри.

— Çукха! Çук! Çук! унта ратиотелефон, тесе ташласа илет тепри.

Шупашкар! Тепре мĕн те пулса уй хапхи пекки шухăшласа кăларха. Çĕрпӳсене „сăмса“ кайалла тавăрса парха!

Кашăк.

# „Тет“ хыççăн кайакансем.

Амăшĕсем турра ĕненмен ачисене хăратаççĕ:

— Астăвăр, хăçан та пулин сире Микул тура йарса илет ак! Ав, илтмени, „çав йалта“ Микул турă пĕр салтака мĕн туса хунă?! тет, теççĕ.

— Мĕн тунă?

— Çав кирлĕ сирĕн пеккисене!.. Пĕр салтак муђчара темиçе ерне çунаť, тет. Салтакран килсен, амăшне муђча хутма калаť, тет. Амăшĕ кайаť. Салтак кĕтесри Микул турра илет те, пуртăпа вакласа амăшĕ шыв ăсма кайнă вăхăтра муђча кăмакинче çунтарса йараť, тет. Çавăншăн салтака Микул турă ĕмĕр муђчара çунмалла тунă, тет. Салтак муђча кĕме кайрĕ те, çунма пуçларĕ, тет; ун тавра вут—çунаť те, çунаť. Час таврăнмантан амăшĕ муђчана чĕнме кайаť,—муђча патне пыма та çук: хĕрӳ! Ывăлне чĕнет. Лешĕ вут ăшĕнчен сасă параť: Ех анне! Мана Микул турă çылăхсемшĕн асаплантараť, тет. Вара мĕн пулнине пĕтĕмпе амăшне каласа кăтартаť, тет.

Çак сăмах тухнăранпа ерне те те иртет. Хĕрарăмсем:

— Ах турă! çав йалти салтак çаплах çунаť, тет, теççĕ.

— Хăш çынсен çакна курса пĕлесси килет: йепле вăл чĕрĕ çын тахçантанпах çунаť, çаплах çунса пĕтмест? Кайаççĕ курма „çав йала“. Çитрĕç. Ыйтаççĕ: ăçта çакăнта пĕр салтак çунаť? теççĕ.

— Е, вăл пирĕн йалта мар, çав йалта. Кунтан пĕр вун çухрăмра, теççĕ.

Çитеççĕ унта.—Çук, пирĕн йалта мар, вăл çав йалта, теççĕ,—кунтан пĕр вунпилĕк çухрăмра...

Лач! сураççĕ те, йатлаçса килелле утаççĕ çунса пĕтми салтака тупаймасăрах.

„Тет“ хыççăн кайакан шыва сиксе вилнĕ, тет.

Ех, çак сăмаха кăларакана хăйне çавăн пек муђчара лайăхрах пĕçертесчĕ.

Трактăр.

# Чăвашсем хушаматланаççĕ,

Чăвашсен ĕлĕк хушамат мĕн пулман. Тĕне кĕнĕ хыççăн та пурте „Васили Иванч" йатлăçеç пулнă. Халĕ пурăнăç çĕнелсе пынă май, вĕсем хушаматсем туйанма пуçланă. Йалтан тухнă чăвашсем ку ĕçе питĕ авăн туса пыраççĕ.

(Чăваш исторĕкĕн сăмахĕ)

„Капкăна" йуратакансен ушкăнĕ умĕнче пĕр пысăк сатач сиксе, вылjаса тăрать.

Хуласене ĕçлеме кĕрекен, вĕренкен чăвашсем шатах çĕнĕ хушаматланса пĕтнĕ.

Револjутси хыççăнах хăшĕ хăшĕ чиркÿ йачĕпе хăйсене тĕне кĕртеççĕ. Похоjупов, Похойавленскайа, Преопрашенски, Воскреçенски, Вознеçенски, Троитски, Похоротски (турра çуратакан).... Пирĕн слушăтчисен çисăкне пăхса тухсассăн, халĕ çурри ытла çавăн пек хушаматлисем. Унтан... Çĕнĕлле... Шивочерковскайа, Пелочерковскайа тенисем те сиксе тухса пыраççĕ.

Теприсем хăвăртлăха систерсе, ларутăру çеммипе хушаматланаççĕ. Пыстров, Прытков, Йасарăв (ах, тав турра, пĕри чăвашлахçке!...), Çмелов, Лjупимов, Шипков, Шумков, Хотулĕн тата ытти... Кусем шатах çÿремелли, чупмалла вырăнсенче (инструктăр йышши сурт халăх) ĕçлеççĕ.

Тата теприсем йывăç, пахча çимĕç, карта тавраш йачĕпе тĕне кĕнĕ отрет. Анис, Пилеш, Репинăв, Каштан, Сатовнĕк, Вишнĕн, Малинĕн, Калинĕн, Сатиккăв, Орешниккăв, Йуман, Тупровĕн, Тупинĕн.., тата ытти... Кусем пур çĕрте те пур. Теприсем—кайăк йачĕсене сăптăраççĕ: Шаланкă, Чĕкеç, Шăпчăк, Курак, Краччук, Шăнкăрч, Уйăп... Кусем шатах литератăр, сăвăç таврашĕсем. Тата малаллисем сăра, тĕс йачĕсемпе: Пелилĕн, Пелов, Черных, Краснох, Краççилнĕк...

Ыттисем—килти кайăк, выljахчĕрлĕхе савакансем: Çелеçнов, Куç, Петтух, Курăчкĕн, Качака, Сурăх, Коçĕн...

Хăшĕсем тата хушамат савăтне шатах урăх урапа çине лартнă.

Вырăс писаттĕлĕсен йачĕсене шăлтăрмаласа чăваш хушшине кÿреççĕ: Пушкĕн, Кослов, Ломоноссов, Tершавĕн, Салтыккoв, Каршин, (Майакковскисем те тухаççĕ пулĕ ĕнтĕ)...

Теприсем паллă историллĕ йатсене сĕнеççĕ: Çиновйев. Кутусăв, Суворăв...

Виçĕ кун каласан та ку пек йатсене пĕтерейес çук.

Тĕлĕнмелле! „Капкăна" çакă тĕлĕнтерет:

Хушамата хăш майпа тупнă, хăш картаран кÿнĕ—çывнисем те çав майлах. Йăликăмăлĕсене те хушамат хуçисенчен турса кÿресшĕн.

Акă сăмахран, Шупашкарта Скопелĕв йатлă милитсионер пур. Хушаматне вăл Елексантăр патшан шурă йанралĕнне илнĕ. Халĕ вăл çав Скопелĕв йанрал турккă çине вăрçăпа кайнине аса илсе хăй те çавăн пек пуласшăн.

Шупашкарта турккăсем çуккипе столовăйĕнче (вăл постăра тăнă вăхăтра столовăйĕнчен татăласшăн мар) ĕçлекен хĕрсене кантăкран кантăка сиктерсе, шывпа сапса, наступленилле вылjать...

„Капкăнăн" тата çаксене питĕ пĕлес килет:

1) „Капкăн „хушаматлă çын тупăнĕши?

2) Хăçан та пулин Похоjупăв, Похойавленскайа таврашĕсем хăйсен ачисене „Капкăн" йачĕпе тĕне кÿртекен пулĕçши?

3) Хушамат вăррисене тытмашкăн „Капкăна" йуратакансем шухăшлаççĕши?

Тапкă.



# Йалсоветсенчи „паттăрсен“ ĕçĕсем.

## Иккассинче çĕнĕ чир.

Иккасси йалсовет претçетаттĕлĕ Йевçей Çтеппанăв çĕнĕ полошени тăрăх ĕçлес вырăнне самоконккă хыççăн чупаť. Пĕрре çак маттур Йевçей Никиттă Çтепанчă патне кĕнĕ те пĕр пичке «çуттине» ĕçсе йанă. Çавăнтан вара Йевçей мучи чирленĕ те хырăмĕ темскер пичкеленсе кайнă. Пичке пичкех, кăшăлĕсем те пур. Çитменнине, çине «самакон» тесе çырнă. (Карттине пăх). Тĕлĕнмелле чир.




Мĕнле, Йевçей мучине пичке хырăм аптăратмасťши? Аптăратсан, Шупашкартан милитсилле тумланнă тохтăрсем те пырĕç. Халĕ наукка темле чиртен те чĕртме пултараť. Иккассири çĕнĕ чире çинчех пĕтересчĕ.

Ырă сунакан.

## Пуйансен лаши.

— Пирĕн йалсовет претçетаттĕлĕ хăй çине пуйансене лартса çӳрет, йал ĕçне тумасť, тесе çыраť Хура-çырмаран (Мăнал в.) пĕр «Хăйматлăх».



— Но, но, чуптар хытăрах, йалсовечĕ.

— Чупма май çук. Есĕ йăвăр. Тăхăр пăт пулĕ те.

— Пĕрре пире пуйансене йăтма пулнă, йăтах...

— Ай... Ай... Ай... Йалсовет пр^е^тçетаттĕлĕ йăнăшаť.

— Пуйансем, вĕсем, йăвăр. Тепĕр пуршуйĕ 11 пăт та туртаť. Çавăн пек пуршуй ĕнсӳ çине хăпарса ларсан, лапчăнсах ларатăн вĕт Хура-çырма претçетаттĕлĕ! Вара пыршу пакартусене те пуçтараймăн.

— Но, но, Хура-çырма претçетаттĕлĕ, чуптар...

## Айхăран вăратмалли май?

Кумашра (Нурăс вул.) йалсовечĕ çывăраť. Мĕн суйланăранпа та 1—2 пуху анчах тунă. Пулăшу комиттечĕ те йалсовечĕпе пĕрлех çывăраť. Кумаш çыннисем хăшĕ йалсовет пурриçуккине те пĕлмĕççĕ. Мĕн майпа çак йалсоветне айхăран вăратасха, тесе ыйтаť «Кумаш чухăнĕ».



—Мĕнпе? Паллах мĕнпе... капкăна лектер те, унтан хĕвел çине хăлхинчен тытса çакса хур.

-- Вара?

— Вара вăранĕ, тет „Капкăн“.

## „Максимум“.

Йалсоветсене йаракан çырусене Шупашкар вулĕçтăвкомĕ хресченсене ăнланмалла мар сăмахсем кĕртет. Сăмахран пĕр çырура: «максимум» тенĕ сăмах пур. Çак сăмаха вулăсри хресченсем пĕри те ăнланмаççĕ. Аранаран пĕр течук майлăскер ăнлантарса панă—„Максăм мучи“ тени пулаť вăл тенĕ.




Шупашкар вулĕçтăвкомĕ есĕ çырма çырнă та, тĕрĕс çырман. Хресченсем ăнланчăр тесен—«максимум» тенине «maximum» тесе çырмалла. Çапла çырсан пĕчĕк ача та ăнланмалла.

# Шӗшлӗ аврипе.

### Хайне—хай улталакан.

Пуп (тарçине). Ну, Васли, епӗ пайан хама ӗçмелӗх ӗçлесе тупрăм!

Тарçийӗ. Мӗнле тата тупма май килчӗ,—виле пулчи мӗн?

Пуп. Çук, вилес текен никам та çук халӗ. Пайан йал тăрăх тырă пухма кайнă чухне кăсйана 5 кӗренкке пуканне чиксе карăм та, кашни турттарса илмессерен, çынсем курачен тырă ăшне çав пукана хурса пытăм. Улталарăм, айвансене! Утик.

### Çăмăр кӳрекенсем.

Платтун (алликче четвӗрт ерех, хăранипе шап-шурă шуралса кайнă). М-М-Мирук, пăхха, пăрлă çăмăр килет! Пӗтӗм тырра пулла çӗмӗрсе кайӗ... Хӗле кӗрсен каллех выçă лармалла пулаӑ.

Мирук. Пăри вара вăл,—çăмăр!

Платтун. Çăмăр мар, пăр!

Мирук. Çăмăр. Çăмăр пулаӑ те, тырă-пулă лайăх çитӗнет. Кайран, алла илсен, хӗлӗпе ӗçсе çисе пурăнăпăр. Е ех, лайăх пулаӑçке!

Платтун. Мӗн малтанах савăнан? Сан ӗссӗр куçу пăрлă çăмăр килнине те кураймаӑ, иккен.

Мирук. Еп ӗссӗри? Ак сана! (пӗрпӗрипе тӳпелешме тапратаççӗ).

Платтунпа Мирук тӳпелешсе чарăннă вăхăтalla çăмăрӗ те, пăрӗ те çук, —çанталăк йапйаках уйар.

Платтун. Вăрçни ахалех пулчӗ пирӗн. Кӳр, Мирук чуптуса илем!

Утик.

### Усал сăмах каланăшăн штраф.

Пӗр йалта усал сăмах каланипе мӗнле майла кӗрешесси çинчен канашланă.

Йулашкинчен пуху çапла постановлени йышăнаӑ:

— Кам усал сăмах калаӑ, 5 пус штраф тӳлет!

7 кун иртнӗ. Пӗтӗм йал... укçасăр пулнă. Хăшӗ-хăшӗ йӗмӗсене те сутса йанă штраф тӳлеме.

---

## „Шиккарнăй" атă.

— Љаванте пиче, мӗн илтӗн ара есӗ çав пасăрхи тутартан?

— Епӗи!? Епӗ унтан шиккарнăй тавар йатлă атă сăранне илтӗм.

— Ну! Мӗнлеха апла шиккарни атă сăранӗ. Халичен епӗ курманçке,—храм таварӗ пуљ?

— Çу-ук: Шиккарнăйах... питӗ çемçе сăран. Акă пăх еппин курман пулсан (хутаççинчен атă сăранне кларса кăтартаӑ). Питӗ лайăх тавар.

— Çакиха? ку сан атă сăранӗ мариç, клейонкă, теççӗ кăна;—авă пăх халлӗ, смала пекскерпе таварне йакатнă та, сана „шикарни тавар" тесе тыттарнă ухмаха.

— Апла еппин ман атă тумалли пулмарӗ. Ну, çапах епӗ ăна урана сырсах çӳрӗпçке.

Çынсем курсан „хвассонни ура" сырнă тетчӗр.

Утик.

## Аван хваттер.

„Канаш" ретаксинче ӗçлекенсем калаçça пыраççӗ.

Пӗри тепринчен ыйтаӑ:

— Сан хваттерӳ инçеи?

— Инçе мар. Манăнни пекки Шупашкарта та çук.

— Телей. Çутă та нумайи?

— Хӗвел çутти лапах кӗрет.

— Апла ăшă та пулӗ?

— Хӗлле пурăнса пăхман та, халӗ тарлаттарса ăша пӗçерет.

— Ну, аван та сан хваттер. Миçе тенкӗ тӳлен уйăхне.

— Пӗр пус та памастăп.

— Апла каçунăй пулмалла вăл?

— Каçунăй.

— Хăш çуртра вара?

— Коммунхос сарайӗн маччи çинче.

П а т м а н.

# Капкӑн хуҫи кӗнчӗлерӗнче.



## 8=16

8 сехет ӗҫлес вырӑнне 16 сехет ӗҫлекенсем те пур. Тӗлӗнмелле арифметикка: 8=16.

— Канаш стантсинчи „горкопӑн" сӑра хупахӗнчи слушӑшчисем кашни кунах 16-шер сехет ӗҫлеҫҫӗ. Ернере пӗр кун та канмалли ҫук. Профпӳро уполномочӗнне Лентсова шалӑсӑ панӑ та, анчах вӑл нимӗн те туман.

Капкӑн хуҫин ресоӆутси: „Охрана труда" йатлӑ учрештенийе чуптара парӑр. Унта лараканскем арифметикка лайӑх пӗлеҫҫӗ, 8=16, темӗҫ. Вӗсем хупахра миҫе слушӑшчи пулмаллине те, ытлашши ӗҫленӗшӗн мӗн чухлӗ укҫа тӳлемеллине те лайӑх шутласа парӗҫ.

### Ҫапӑҫас ыйту.

— Орискинче (Шурча вул.) арман хуҫисем, страшникра пурӑнвӑ ҫынсем йалхуҫайстви йулташлӑхӑ уҫнӑ. Перпӗринпе тавлашас, вӑрҫас килсен, вӗсем тӑххӑрӑн пухӑнса сопранисем тӑваҫҫӗ. Унта вара, ыйтусене сӳтсе-йавас вырӑнне, перпӗринне ҫӳҫӗсене татма тытӑнаҫҫӗ. Пӗрре Сахар Антрейӗв йатлӑ ҫынна хӗпхӗрлӗ йун туса йанӑ. Аҫтан пулӑшу ыйтас?

Капкӑн хуҫин ресоӆутси: Сахар Антрейӗва вӑрҫӑра аманнӑ шӑн поссоли пама пултараҫҫӗ, анчах Сопесрон мар, сут учрештенисенчен.

### Ратио кирлӗ.

— Хӗрлӗ Чутай пуӆнитсинчи хвершӑлсем вҫаткӑшӑн йӑтӑ пек харкашаҫҫӗ. Ҫакна 3 вулӑсри ҫынсем пӗлеҫҫӗ, 100 чалӑшра ларакан вулӗҫтӑвком пӗлеймест.

Капкӑн хуҫин ресоӆутси: Хӗрлӗ Чутайне ратио лартмалла. Ратио лартсан ун ҫинчен вулӗҫтӑвком мар, пӗтӗм тӗнче пӗлме пултарать.

### Караҫ пулӑ.

— Пыркка Йакурӗ Каҫал йалӗн халӑх вӑрманне сыхларӗ. Ҫавӑншӑн унӑн вӑрманти ута ҫулса илмелле чӗ. Анчах ҫаранне Караҫкӑ йатлӑ арман хуҫине панӑ,—патрак ҫарансӑрах йулнӑ. Пулӑшакан никам та ҫук. Капкӑн хуҫи, пулӑшсам!

Капкӑн хуҫин ресоӆутси: Караҫкӑна тытма караҫ кӳллине вӑлта йарӑр. Тытсассӑн профсойуса кӳрсе парӑр,—пит йуратаҫҫӗ унта ун пек ҫуллӑ пулӑсене.

### Кӑкшӑм пуйанӗ.

— Палтай вулӑсӗнчи Кӑкшӑм йалӗнче пӗр кул к пур тавара та виҫӗ хакпа сутать. Мӗн тӑвас ӑна?

Капкӑн хуҫин ресоӆутси: Палтай вулӑсӗнчи палтапа кӗрешес пулсан, копператтив уҫӑр. Тата ун ҫинчен Внуторка ш лӑпа парӑр. Вӑл вара ҫав палтана 3 хут ҫамкинчен шаккаса илӗ.

---

### Ҫатан урапапа вӑрҫакан.

Шуркассинчи Амуртсӗв йатлӑ комсомолӗс йулашки туйсенче ӳссех кайнӑ. Вӑйне ниӑҫта чикеймесӗр ашшӗпе ҫапӑҫса илнӗ. Вӑйӗ унпа та пӗтеймен те (ҫӗнтересе те ҫӗнтерейменӗнсерен туйанкаланӑ) ҫатан урапапа вӑрҫса кайнӑ. Халӗ пуртӑпа касса вакланӑ ҫатанӑн тӗпренчӗкне, Амуртсӗв хӑйех ашшӗне „Капкӑн" архивне леҫтерешӗн.



— Хаçатсем çинче тăлăх-турата пулăшмалла, теççĕ.

Мана мĕншĕн пулăшмаççĕ? Манăн та атте-анне çукçке. Пĕртен-пĕр атте пурчĕ, вăл та пулин тĕрмере ларать. Сайавлени парса пăхас.

## „Çутта кăларакан".

Çĕнĕ Шелтемре (Сиккасси вулăсĕнче) Акуша Коврйĕва йатлă вĕрентекен çапла калать:

—Ман çав тĕттĕм халăх хушшинче калаçас та килмест, тет.

Пирĕн „Капкăн" та унпа калаçассăнах мар,—кап! хĕстерсе лартрĕ ăна хăй ăшне.

## «Ачасем пирĕн шанчăк».

Апла каланине Анчăк кассинче (Сала в.) йурагмаççĕ. Сăмахран, Вăрăм Аҫтук авă тăлă: ачасен çĕрне акса пурăнать. Аҫтук ачасене çăвăрне те çитермест, хăй патĕнче те усрамасть, урамра çÿреттерет. Çавна кура йалти комиттет:

— Пулин, çитермин, тет.

Йалканашĕ тата:

— Хар-р! Хар-р! тесе кăнтăрла та харлатгарсах çывăрать.

# Хроникка.

— Чăваш республĕкĕнчи почтă кантурне „тăмсахай" йатлă чир йернĕ. Ун куçĕ пĕр йапала вырăнне икĕ йапала куракан пулнă. Почта Шупашкартан пĕрер лашапа кăларса йарать те, ăна икĕ лашапа йанăн туйăнать. Тухтăрсем калана тăрăх, почтă кантурĕ тăмсахай чирпе чирленĕренех „Канашăн" 87-мĕш номĕрне вуласа тухайман, тет.

— Хĕрлĕ-Чутай вулçтăвкомĕнчи ĕçлекенсем халĕ кĕпчелерне çĕнĕ çурта куçарнă. Çурчĕ çине „Пиво" тесе пысăк саспаллисемпе çырнă вывескă çакса йанă.

— Мăрат вулăсĕнчи йалхуçайстви копператтивсем нихăшĕ тейратлă выҫăхчĕрлĕхсене усрамасчĕç халĕ ĕнтĕ ăслăрах копператтив правленисем „çипирски кот" текен выҫăха усрама шухăш тытнă.

## Сутмалли йумахсем.

1. Пĕчĕкçĕ тÿшек çитти пĕтĕм чăваш çĕрне саралнă. Çапать, тĕртет, чĕпĕтет, тирет, ăс та парать.

(„Капкăн").

2. Виç уйăх пурнать,
Пĕр уйăх йурлать.
Хресченпе йăва çавăрать.
Çав кайăка кам паллать?

(Шăнкăрчă).

3. Çутă, çаврака. Курмэн нумай пулатьха. Килчĕ те, патша орйолĕсĕрех, хăй вырăнне йышăнчĕ.

(Кĕмĕл тенкĕ).

4. Пăхăр çăвар кăшкăрсах ĕмĕрне иртерет.

(Граммофон).

5. Пĕлĕт çинче кайăк пек, çĕр çинче кăлтăрмач çинче.

(Аэроплан)

# Усăллă опйавленисем.

Çитес кунсенче пирĕн ретаксийе çакăн пек опйавленисем килмелле пек туйăнаť.

———

Тавар илекенсене çăмăл пултăр тесе, Сĕнтĕр-вăрринчи ĕçлекенсен копператтивĕ çакна пĕлтерет: копператтивран кĕтесле çăнăх илес текенсен çак кунсенче лапкана пымалла: аввустăн 32-мĕш кунĕнче, çенťапĕрĕн 31-мĕшĕнче, нойапĕрпе теккапĕрпе 32-мĕш кунĕсенче. Вăл кунсенче иртен пуçласа каçченех таварсене кĕтесле паратпăр.

Ун пек числасем пулмаççĕ тесе суйса çӳрекенсене çапла каласа ăнлантармалла: халĕ пирĕн тăрăхра çанталăк (климăт) улшăнсах пыраť, çавăнпа вăл числасем пулма пултараççĕ, темелле.

———

Йăнтăрча патĕнчи вăрман (Çĕрпӳ леçничестви леçникне Микита Йаккăпне килеççул—вађђи вăрман вăрлакансем, тата майăр пуçтаракан хĕрсем кирлĕ. Услови: вырăна кĕрес текенсен Арапуç йалне пырса Йаккăпăн 20 теçеттин тыррине укçасăрах вырса памалла (кăçалхи пек).

Йалкорсен, „Капкăн" сотрутнĕкĕсен пырса чăрманмасан та йураť. Вĕсене вађђи вырăн çук.

———

Шупашкарти хăш—хăш макађăнсене прикашчăксем кирлĕ. Кĕрес текенсен çаксене пĕлмелле:

1. Тавар сутнă чухне „сысна хырăмне арпа пăсмасť" тенĕ лосунка ĕçе кĕртсе пымалла.

2. Çĕрĕк тавар сутнăшăн йатлаçакансене намăслантармалла.

———

Йенкасси йалĕ (Курнавăш вул.) кĕтӳçĕ шыраť. Кĕрес текенсен: темле пысăк чышкăпа çапсан та пит çăмарти кăвакарманнине пĕлтерекен утостоверени тухтăртан илсе пымалла.

Милитси, суг тавраш-ĕсене илместпĕр, пырса та ан чăрманчăр.

———

Кама хăватлă сăмакункă кирлĕ— Аслă-Арапуç йалне пырăр. Ĕççыннисене йӳнĕ хакпах паратпăр. Наркăмăшла сăмакункка та пур. Милитси—мĕн тытасран хăрамалли çук.—Вулăс милитсионерĕ Сетойкин хăй те ханша ĕçме пыраť.

Çӳлте кăтартнă учрештенисемпе ахађçынсем çав опйавленисене хаçата кĕртесех теççĕ пулсан, кăнтăрла иртни 2 сехет иртичен „Канаш" кантурне пырса укçа тӳлемелле. Унсăрăн опйавленисене кĕртместпĕр

Пулас опйавленисен пайĕ пуçлăхĕ

**Лăриван Йăванĕ.**

Врид. ответ. редактора **Алендеев.**

Чувашоблит № 1432. Чебоксары, Тип. „Чувашская книга".